27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ИЮЛЬ 12 ЮНКУН 137 (6632) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председательне СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Чăвашсен государство педагогика институчĕн студенчĕсем, наука работникĕсем, преподавательсем тата служащисем, Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерӳсене хавхаланса, нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма вăй ситнĕ таран пулăшас тесе, хăйсен перекетне укçинчен 100.333 тенкĕ пуха боевой техника туме хывнă.

Эпир хамăрăн юратнă Тăван çĕршыва [illegible] тăшмана тĕп-тĕпрен çĕмĕрсе тăкас ĕçе [illegible].

Сире, хаклă Сталин юлташ, эпир [illegible] мăран пĕтĕм вăй-хăватпа пĕлĕве халăха сутта кăларас [illegible] социализмлă культурăна малалла аталантарас [illegible].

Сире, тăван атте тата учительмĕр, пирĕн çĕнтерӳсен хавхалантаракан Иосиф Виссарионович, нумай çулсем хушшин пурăнма сывлăх сунатпăр!

Институт директорĕ З. М. МИЛОВИДОВ.
Парторганизаци секретарĕ П. П. ПАВЛОВ.
ВЛКСМ Комитечĕн секретарĕ Д. ФЕДОРОВА.

Чăваш АССР-ĕ, Сĕнтĕрвăрри, Чăвашсен государство педагогика институчĕ

Институт директорне МИЛОВИДОВ юлташа

Парторганизаци секретарне ПАВЛОВ юлташа

ВЛКСМ Комитечĕн секретарне ФЕДОРОВА юлташа

Чăвашсен государство педагогика институтĕнчи студентсемпе наука работникĕсене, преподавательсемпе служащисене, боевой техника тума 100.333 тенкĕ пухнăскерсене, манран тăванла салам ка лăр тата Хĕрлĕ Çар тав туни çинчен пĕлтерĕр.

И. СТАЛИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 10-мĕшĕнче КАРЕЛИ фрончĕн çарĕсем ПИТКЯРАНТА хулине штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти темиçе пункта йышăннă, вăл шутра — ЧАЛКОСЕЛЬГА, КАНГОЗЕРО, МАСЕЛЬГА, ЛОЗАЯРВИ, УКСУ, ЛУПИНКО ятлă пысăк ялсем.

ДВИНСК хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах тăшманпа çапăçса малалла тапăнса пынă. Литва ССР-ĕн уезд центрĕсене НОВЫЕ СВЕНЦЯНЫ хулипе УТЕНА хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ДРЫСЬВЯТЫ, ПРУЦЕ, НОВЫЕ ДАУГЕЛИШКИ, КОЗАЧИЗНА, ДАУГАЛЯЙ, ТАУРАГУНАЙ, ЛЫНГНЯНЫ, ИГНАЛИНО, КОЛТЫНЯНЫ, ПОДДУБИНКА ятлă пысăк ялсем тата ИГНАЛИНО, НОВЫЕ СВЕНЦЯНЫ, ПАЖЕЙМЕН, ПАБРАДЕ чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем ДВИНСК хулипе КАУНАС хули хушшинчи шоссе çулне татнă.

ВИЛЬНЮС хулинчен çурçĕртерехре, хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 200 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ГРУШТЕЛИ, ПИКИЛИШКИ, ПОШИЛКИ, РЕША, ШВЕДЫ, ШИЛАНЫ, ЛАНДВОРОВО, ЗВЕРИНЕЦ, РУДНИКИ, БЕНЯКОНИ, ГЕРМАНИШКИ ятлă пысăк ялсем, ЛАНДВОРОВО ятлă узловой чугун çул станцийĕ, СТАСИЛАЙ, БЕНЯКОНИ ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем ВИЛЬНЮС хулине çавăрса илнĕ те хула варринче тăшмана пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă.

МИНСК хулинчен хĕвелтухăçнерехре БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах тăшманăн çавăрса илнĕ ушкăнĕсене пĕтерсе пынă. Июлĕн 9-мĕшĕнче пирĕн çарсем 3.500 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Пирĕн çарсене нимĕçсен 12-мĕш армейски корпусĕн командирĕ (вăлах 4-мĕш арми командующийĕн ĕçĕсене туса тăнă) МЮЛЛЕР генерал-лейтенант та 260-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ КЛЯММТ генерал-майор хăйсен штабĕсемпе пĕрлех тыткăна паранна.

ЛИДА хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 80 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ОГОРОДНИКИ, СЕЛЕЦ, НОГОРОДОВИЧИ, ЗАЧЕПИЧИ, ПОГИРЫ, ЯТВЕЗЬ, ГИРИЧИ, ВЕНЗОВЕЦ, ЯВОР, ШОСТАКИ ятлă пысăк ялсем тата МИНОЙТЫ, НЕМАН, ЯЦУКИ чугун çул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем ШАРА шывĕ урлă 60 километр тăршшĕ участокра каçнă та çулйĕрсен пысăк узелне — СЛОНИМ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — Барановичи облаçĕнчи район центрĕ БЫТЕНЬ ялĕ, БАБИНИЧИ, ПОРЕЧЬЕ, АЛЬБЕРТИН, ШИЛОВИЧИ, МИРОМИН, ГНОЙНО, ЧЕМЕЛЫ, МОГИЛИЦА ятлă пысăк ялсем тата АЛЬБЕРТИН, ДОМАНОВО чугун çул станцийĕсем. Пирĕн чаçсем нимĕçсен 9-мĕш армийĕн инженери службин начальникне ШМИДТ генерал-майора тыткăна илнĕ.

Çакăнпа пĕрлех ПИНСК хули енче БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем ЛУНИНЕЦ хулипе пысăк чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ПИНСК облаçĕнчи район центрĕ ДАВИД-ГОРОДОК хули, БОСТЫНЬ, ДЯТЛОВИЧЕ, ДВОЖЕЦ, ВИЧЕН, ЯЗВИНКИ, РОКИТНО, БЕРЕЗЬЦЕ, МАЛОДЕЛЬЧИЦЕ, БАРИЧЕВИЧИ, КОЛБЫ, ЛОПАТИН ятлă пысăк ялсем тата ЛУША, ДЯТЛОВИЧЕ, ПРИПЯТЬ чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусем пулман.

Июлĕн 9-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 29 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 64 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ БРЕСТ ТАТА ОРАНЫ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

Июлĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци йышлăн вĕçсе кайса Брест, Ораны (Вильнюс хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) чугун çул узелĕсене тапăннă. Бомбăсем пăрахнине пула, Брест чугун çул узелĕнче 20 тĕле ытла пушар тухнă. Нимĕçсен çар эшелонĕсем çуннă, унта темиçе взрыв пулнă. Чугун çул узелĕн çурçĕрти пайĕнче тăшман склачĕсен районĕнче питĕ вăйлă взрыв пулнă.

Ораны чугун çул узелĕнче, бомбăсем пăрахнине пула, йышлă пушарсем тухнă. Вăйлă взрывсем пулнă, вара чугун çул узелĕн пĕтĕм территорине вут хыпса илнĕ.

☆ ☆ ☆

Двинск хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла тапăнса пынă. Кӳлĕсем хушшинчи вырăнсенче çирĕпленсе ларнă тăшман хытă хирĕç тăрса çапăçнă. Пĕр соединени чаçĕсем, хăвăртлăн пыра-пыра çапса, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та вăйлă çирĕплетнĕ Дрысьвяты пунктне туртса илнĕ. Гитлеровецсен икĕ батальонне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет пехотинецĕсем 30 километр малалла куçнă та шоссе çулĕсен тата грунт çулĕсен узелне — Литва Совет республикин уезд центрне Утена хулине туртса илнĕ. Пирĕн çарсем Двинск хулипе Каунас хули хушшинчи шоссе çулне татнă. Тыткăна нумай илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Вильнюс хулинчен çурçĕртерехре, хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Тăшман Германирен чугун çулпа тата самолетсемпе илсе çитернĕ горнострелковăй бригадăна, авиадесант полкне, авиаполевой полкне çапăçăва кĕртсе янă. Çапăçусенче çавăн пекех тата фронтри ытти участоксенчен халь çеç куçарса килнĕ танковăй дивизин тата нимĕç пехотин чаçĕсем вăрçаççĕ. Совет чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, халăх пурăнакан 200 пункта ытла туртса илнĕ. Вильнюс хулине пирĕн çарсем çавăрса илнĕ, нимĕçсен гарнизонне ункă ăшне хĕстерсе лартнă. Хула ăшĕнчи çапăçу хаярланнăçемĕн хаярланса пырать. Пирĕн пехотинецсемпе танкистсем урамри вăйлă çапăçусенче тăшманăн час-часах алă вĕççĕн тытăçа-тытăçа илеççĕ, гитлеровецсене хулан хĕвелтухăç тата кăнтăр пайĕсенчен хĕссе кăларнă. Халĕ çапăçусем хула варринче пыраççĕ.

* * *

Минск хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкин сапаланса пĕтнĕ чаçĕсене пĕтерсе пынă. Тыткăна лекнĕ нимĕçсем çапла каласа кăтартаççĕ: «хурана» кĕрсе ӳкнĕ нимĕç çарĕсем радио тăрăх Гитлер приказне илнĕ. Çав приказра Гитлер нимĕç офицерĕсене пăсăлса кайнă дисциплинăна мĕншур майсемпе çирĕплетме хушнă, кăнтăр-хĕвеланăç еннелле татса тухма хушнă. Гитлер ставки хушнă тăрăх, офицерсем салтаксене улталаççĕ. Вĕсем салтаксене — пире пулăшма Минск хулинчен нимĕç çарĕсен пысăк вăйĕсем килеççĕ, тесе ĕнентереççĕ. Минск хулипе Барановичи хулине совет çарĕсем йышăнни çинчен салтаксене ку таранччен пĕлтермеççĕ. Пирĕн çарсем тăшманăн вăрмансенче пытанса çӳрекен отрячĕсене аркатаççĕ. Иртнĕ кун хушшинче тулли мар даннăйсем тăрăх, 2.200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вăл шутра — 12 танк, 38 тупă, 100 автомашина ытла тата çар пурлăхĕн 9 склачĕ. Тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен хисепĕ куносеренех ӳссе пырать.

* * *

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Совет танкисчĕсем тата пехотинецсемпе кавалеристсем тăшмана умлăн-хыçлăн пыра-пыра çапнă, вара ĕнер каçхине Слоним хулин хĕвелтухăç хĕррине вăркăнса кĕрсе кайнă. Çав вăхăтрах пирĕн ытти чаçсем Слоним хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра нимĕçсене флангран пыра-пыра çапнă та Шара шывĕ урлă анлă фронтра каçса кайнă. Тăшмана çавăрса илмелли маневр туса тата фронтран атакăласа, пирĕн çарсем паян Слоним хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ. Тăшмана пысăк çухатусем тӳстернĕ. Нимĕçсен 9-мĕш армийĕн инженери службин начальникне Шмидт генерал-майора тыткăна илнĕ. Июнĕн 23-мĕшĕнче наступлени тума пуçланăранпа тыткăна илнĕ нимĕç генералĕсем хушшинче ку ĕнтĕ вун саккăрмĕш генерал пулать.

Пинск хули енче пирĕн пехота, Днепр шывĕ çинчи çар флотилийĕн краснофлотецĕсемпе килĕшсе кĕрешсе, пĕр вăхăтрах çурçĕртен, хĕвелтухăçĕнчен тата кăнтăртан пыра-пыра çапса, Лунинец хулипе чугун çул узелне туртса илнĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Петр Леонидович Капица академика Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Физика тĕлĕшпе питех те паллă научнăй çитĕнӳсем тунăшăн, çуралнăранпа 50 çул тултарнă май, Петр Леонидович Капица академика Ленин орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи июлĕн 9-мĕшĕ.

Америкăн наци праздникĕ пирки М. И. Калинин тата Ф. Д. Рузвельт пĕр-пĕрин патне янă телеграммăсем

Франклин Д. Рузвельт господина, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президентне

ВАШИНГТОН

Наци праздникĕ майĕпе, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен [illegible] Кунĕ çитнĕ май, Сире, господин Президент, совет халăхĕн ячĕпе тата хамăн ячĕпе чĕререн саламлатăп, хамăрăн туслă Америка халăхне тата Сире [illegible].

Кăçал Америка халăхĕ наци праздникне Америкăн Британи çарĕсем [illegible] хĕвеланăçĕнче, совет çарĕсем хĕвелтухăçĕнче [illegible] Германине хăватлăн пыра-пыра çапаççĕ. Эпĕ çакна шанса тăратăп: çак çарсем [illegible] пирĕн пĕрлешнĕ çĕршывсен [illegible].

М. КАЛИНИН.

Унăн превосходительствине М. И. Калинина, СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне

МУСКАВ

Пирĕн наци праздникĕ çитнĕ май Эсир чунтан саламласа çырнă телеграммăшăн эпĕ Сире Пĕрлешӳллĕ Штатсен халăхĕпе правительстви ячĕпе тав тăватăп. Пĕрлешӳллĕ нацисен хĕçпăшаллă вăйĕсем, шур фронтсенче те çав тери савăнтаракан çĕнтерӳсем тăваканскерсем, пĕрле килĕштерсе кĕрешни пирĕн пĕрлехи тăшмана таткăлăн та пĕтĕмпех çĕнтересси патне илсе пырĕ тесе эпĕ те Сирĕн пекех шанса тăратăп. Эпĕ çакна пĕлсе тăратăп: пирĕн çĕршывсен аслă çапăçусенче (вăрçăсенче тата пулассисенче) пуплатнă союзĕ канăçлă мир тăвас ырă задачăна пурнăçа кĕртнĕ вăхăтра та малалла ӳссе çирĕпленсе пырĕ.

Франклин Д. РУЗВЕЛЬТ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕ, Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕн хуласемпе районсенчи промкомбиначĕсен, инвалидсен кооперацин артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, çак промкомбинатсемпе артельсем мала тухнине палăртнă:

Районсемпе хуласенчи промкомбинатсен ăмăртăвĕнче Тăвай, Пăрачкав, Комсомольски райпромкомбиначĕсем мала тухнă. Тăвай промкомбинатне (управляющийĕ Игнатьев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Широв юлташ) Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 15.000 тенкĕ укçа памалла тунă. Пăрачкав райпромкомбиначне (управляющийĕ Серапионов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Смыков юлташ) ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ тата Комсомольски райпромкомбиначне (управляющийĕ Щукин юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Падюков юлташ) 5.000 тенкĕ памалла тунă.

Июнь уйăхĕнче Вăрнар, Кувакино, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр, Вăрмар, Çĕрпӳ райпромкомбиначĕсем тата Шупашкар хулинчи промкомбинат лайăх ĕçленине палăртнă. Çав вăхăтрах Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Шăмăршă, Етĕрне райпромкомбиначĕсем начар ĕçленĕ.

Инвалидсен кооперации артелĕсен ăмăртăвĕнче Вăрнарти «Трудовик», Канашри «Красный воин» артельсем мала тухнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Шупашкарти «Чебторгин» артельтен илсе Вăрнарти «Трудовик» артеле (председателĕ Молчанов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Осипов юлташ) памалла тунă тата ăна малта пыракан работниксене премилеме 15.000 тенкĕ укçа панă. Канашри «Красный воин» артеле (председателĕ Корчагин юлташ, хула совет исполкомĕн председателĕ Кизилов юлташ) малта пыракан работниксене премилеме 10.000 тенкĕ укçа панă.

Июнь уйăхĕнче Улатăрти «Союз инвалидов», Комсомольски районри «Красный инвалид», Шупашкарти «Чебторгин», Çĕмĕрлери «Партизан» артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Июнь уйăхĕнче Улатăр районĕнчи Киров ячĕпе тăракан, Элĕк районĕнчи «Трактор», Йĕпреçри «Помощь», Ишлей районĕнчи «Красный стрелок», Сĕнтĕрвăрринчи «Социализм», Первомайски районĕнчи «Трудовик», Кукеçри «Парижская коммуна» артельсем начар ĕçленĕ.

Ялсовечĕсен кулленхи тивĕçĕ

Кăçал февраль уйăхĕнче ялсовет депутачĕсем суйлавçăсем умĕнче отчет туса панă. Отчетлă пухусем пурĕ 1.725 çĕрте иртнĕ, вĕсенче 2.613 депутат отчет туса панă. Пухусенче пĕтĕмпе 185.752 суйлавçă пулнă, отчетсем тăрăх 9.322 çын ытла тухса каланă. Отчетлă пухусенче суйлавçăсем, депутатсемпе ялсовечĕсен ĕçĕсене тишкерсе тухса, çитменлĕхсене критиклерĕç, паха сĕнӳсем парса хăварчĕç.

Суйлавçăсем панă сĕнӳсене пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕн тăрăшакан депутатсемпе ялсовечĕсем хăйсен ĕçне чылаях лайăхлатрĕç. Ялсовечĕсенчен нумайĕшĕсем сессисене, ларусене план тăрăх иртерме, йышăннă решенисене пурнăçланине тĕплĕн тĕрĕслесе тăма тытăнчĕç. Улатăр районĕнчи Засурский ялсовечĕ кăçал сессисем 5 хутчен иртернĕ. Вĕсенче çуракине хатĕрленесси, вăрман хатĕрлев планне тултарни, колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен тата ытти нумай ыйтусене сӳтсе явнă. Кусемсĕр пуçне ялсовечĕн ларăвĕсенче яла юсаса илемлетесси, фронтовиксен çемьисене пулăшасси, шкулсен ĕçĕсем çинчен тата ытти ыйтусене те сӳтсе явнă. Ялхуçалăхне ĕртсе пырас ыйтусемпе ялсовечĕ уйрăмах нумай ĕçленĕ. Вăл хăйĕн ларăвĕсенче колхоз председателĕсен отчечĕсене итленĕ, çитменлĕхсене пĕтерме пулăшнă.

Отчетлă пухура ялсовет çумĕнчи ялан ĕçлекен комиссисен ĕçĕсене лайăхлатма хушса хăварнă. Çавна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе те сахал мар ĕçленĕ. Халĕ ялсовечĕ çумĕнче оборона, шкул, суту-илӳ, бюджет, сывлăха сыхлас тата ялхуçалăх комиссийĕсем ĕçлеççĕ. Ялхуçалăх комиссийĕн председателĕ Ленивцев юлташ колхозсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене ялан ялсовечĕн ларăвĕсенче сӳтсе явма лартать. Ялсовечĕ ялхуçалăх комиссийĕ панă сĕнӳсене пурнăçа кĕртме пулăшать. Çавна пула ĕнтĕ ялсоветне кĕрекен колхозсем пурте çуракине ăнăçлăн вĕçлерĕç. Фронтовиксен çемйисене пулăшма планран ирттерсе 5.5 гектар акса хăварнă. Колхозсем çĕртме туса пĕтернĕ. Çурхи тырăсене пĕтĕмпех çумланă, силос хывмалли плана тултарнă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те начар мар ĕçлеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă. Государство умĕнчи обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Колхозра ялан ăмăртса ĕçлеççĕ. Ялхуçалăх комиссийĕ вара обязательствăсене мĕнле пурнăçланине тăтăшах тĕрĕслесе пырать.

Бюджет комиссийĕ те начар мар ĕçлет. Комисси членĕсем финанс планне тултарассишĕн тата Хĕрлĕ Çар валли çапăçу техники тума укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче хаçат-журналсем вуласа пăраççĕ, калаçусем ирттереççĕ.

Оборона комиссийĕнче пурĕ 27 çын тăрать. Вĕсем пулăшнипе 1944 çулта фронтовиксен çемйисене пулăшма 200 пăт çăнăх, 100 пăт çĕрулми, 300 литр сĕт, 50 килограмм какай пухнă.

Халĕхи вăхăтра ялсовечĕ тырпулсене пухса кĕме хатĕрленес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлет. Машинăсене мĕнле юсанине тăтăшах тĕрĕслесе тăрать, колхозниксемпе колхозницăсене вăйлă тырпулшăн кĕрешме мобилизацилет.

Анчах та суйлавçăсен сĕнĕвĕсене пур ялсовечĕсем те тивĕçлипе пурнăçа кĕртмеççĕ-ха. Акă, Улатăр районĕнчи Явлей ялсоветне илер. Вăл сессисемпе ларусене те вăхăтра ирттермест. Отчетлă пуху Молотов ячĕпе тăракан колхоза пулăшу пама хушнине те пурнăçламан. Ялсовечĕн депутачĕсем колхозниксем хушшинче дисциплинăна çирĕплетессишĕн сӳрĕк кĕрешеççĕ. Çавна пула ĕнтĕ унта ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем 50 çынран та ытла. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана тултарман. Ялсовечĕ укçа-тенкĕ пухас плана та пурнăçа кĕртмен. Иккĕмĕш квартальти плана пурĕ те 40 процент çеç тултарнă, ку ĕçе актива явăçтарман. Ялсовечĕ çумĕнчи комиссисем те начар ĕçлеççĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ, Улатăр райсовет исполком председателĕн Поверенов юлташăн тата Засурский ялсовечĕн председателĕн Герасимов, Явлей ялсовчĕн председателĕн Моланина юлташсен отчечĕсене итленĕ хыççăн, суйлавçăсем панă сĕнӳсене сывăх вăхăтрах пурнăçа кĕртме хушрĕ. Верховный Совет Президиумĕ ялсовечĕсен председателĕсене хăйсен ĕçне суйлавçăсем панă сĕнӳсене пурнăçлас май çĕнетсе лайăхлатма, ялан ĕçлекен комиссисен ĕçне çĕклеме, ялсовечĕсен ĕçне актива ытларах явăçтарма хушса хăварчĕ. Суйлавçăсен сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртесси — ялсовечĕсен кулленхи тивĕçĕ пулса тăрать.

М. ПРОХОРОВ.

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

Утă çулас ĕçе хăвăртлатмалла

ИШЛЕЙ. (Телефонпа, хамăр корр.). Районри колхозсен кăçал 1992 гектар çаран ути, 812 гектар клевер пуçтармалла. Июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне 1542 гектар çаран ути (78 процент), 367 гектар клевер (15 процент) çулнă, 13 колхоз утă çулса пĕтернĕ. «Правда» колхоз 30 гектар çулнă, çав шутран ытларах пайне типĕтсе капана хывнă. Утă çулас ĕçе Свердлов ячĕпе тăракан колхозра лайăх организацилеНĕ. Кунта утта звенопа çулаççĕ. Кашни звенора 7—8 çын, вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Колхозниксем уйрăм сдельщинăпа ĕçленĕ май, нормăсене ирттерсе тултараççĕ. М. Грибова звени уйрăмах тухăçлăн ĕçлет, ĕç пахалăхĕ те лайăх. Ку колхозра 43 гектар утта çулса пĕтерчĕç, вăл шутран нумай пайне капана хыврĕç тата 7 гектар клевер çулчĕç.

Анчах районри колхозсен ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур. Чылай колхозсенче уйрăм сдельщинăпа ĕçлессине йĕркелемен, ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке çинчен ăнлантарса паман. Матикассинчи «Боевик» колхозра колхозниксем уйрăммăн мар, пĕрле ĕçлеççĕ. Çавăнпа кунта ĕç тухăçлăхĕ начар, нормăна ирттерсе тултараканĕсем çук. Колхоз 8 кун хушшинче те 14 гектар çеç çулнă, çулмалли тата 31 гектар пур. Утă çулмалли машинăпа юсаман, çавăнпа та унпа усă курмаççĕ.

Ку колхозра агитаци ĕçĕ çинчен маннă. Утă çулаканĕсене çĕнĕ хыпарсем пĕлтерсе тăраканĕсем çук, стена хаçачĕ тухмасть, кăларту хăми çине çырса пымаççĕ.

«Искра», «III-мĕш Интернационал» колхозсенче иртнĕ хĕлте выльăх апачĕ çитменнипе аптăранă, çавăнпа выльăхсен йышĕ чакнă. Анчах çав колхозсен руководителĕсем çапах та тивĕçлĕ вывод туман. Вĕсем выльăх апачĕ хатĕрлеме кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. «Искра» колхозра ĕç дисциплини начар, чылай колхозниксем утă çулма тухмаççĕ, хăйсен хуçалăхĕсенче ĕçлеççĕ. Июлĕн 8-мĕшĕнче ĕçлеме пултаракан 90 çынран 60 çын çеç утă çулма тухнă.

«III-мĕш Интернационал» колхозăн улăх пысăк мар. Çапах та кунта пур пек улăхран та утă пухса илессишĕн тăрăшмаççĕ. Ял çумĕнчи утта выльăхсене çитерсе янă, юлнă пек лаптăкне тимлĕн çулмаççĕ. Колхоз 4 кун хушшинче 2,5 гектар çеç утă çулнă.

«Искра», «III-мĕш Интернационал» колхозсем район центрĕпе юнашарах. Анчах та çак колхозсенче утă çулнă çĕрте агитаци ĕçне организацилес пирки ВКП(б) райкомĕ нимĕн те туман.

Т. ИВАНОВ.

Улăхра ăмăртса ĕçлеççĕ

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Хирпуçĕнчи «Победа» колхоз членĕсем кăçал утă çулас ĕçе организованно туса пыраççĕ. Ку таранччен вĕсем 67 гектар çулса пуçтарнă, тепĕр 2—3 кунтан утă çулса пĕтереççĕ.

Утă çулаканĕсем хушшинче ăмăрту анлăн сарăлнă. Вĕсенчен чылайĕшĕсем нормăна икĕ хут ытла ирттерсе тултараççĕ. 7-мĕш бригадăри София Петровăпа Серафима Афанасьева куллен 0,45—0,50-шар гектар çулаççĕ.

Кăмашари Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çитес 2—3 кун хушшинче утă çулса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ. Ку таринччен кунта 15,5 гектар улăх ути тата 25 гектар вика çулнă. Утă çулаканĕсем Александра Антонова, Васса Порфирьева, Кликерия Ананьева нормăна 180 процент тултараççĕ. 68 çулхи Василий Кучеров колхозницăсемпе çавасем юсаса тата туптаса парать, апла пулин те утă çулас нормăна 150—160 процент тултарать.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем силос хывмалли плана та ирттерсе тултарчĕç. Кунсăр пуçне вĕсем 5 лав арăмути, 20 лав милĕк хатĕрлерĕç.

Тырпула пухса кĕме хатĕрленетпĕр

Тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухни колхоз пурнăçне çĕклет. Çавăнпа та çак ответлă вăхăта пур енчен те хатĕрленме тивет. Тырпулсене пухса тухиччен ытти ĕçсене те туса пĕтерме тăрăшмалла. Çакна шута илсе, пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Эпир çĕртме туса пĕтертĕмĕр. Ку ĕçре уйрăмах 4-мĕш бригадăри çамрăксем лайăх ĕçлерĕç. Н. Осипов, М. Семенов, В. Николаев юлташсем кулленхи нормăна ирттерсе тата лайăх пахалăхпа тултарса пычĕç. 3-мĕш бригадăра П. Степанов тата А. Алексеев юлташсем мала тухрĕç. Çĕртме пуссине 3.000 лав ытла тислĕк кăлартăмăр.

Халĕ пикенсех утă çулатпăр. Пирĕн улăх пысăк мар, пурĕ те 11 гектар çеç, унсăр пуçне кăçал çулмалли 18 гектар клевер пур. Вĕсене çак кунсенчех çулса пухатпăр. Паллах, утă пирĕн выльăхсене хĕл каçарма çитмест. Çавăнпа та колхозниксемпе колхозницăсем хăй тĕллĕн ӳсекен курăксене тăрăшса пухаççĕ: 15 центнер вĕлтрен, 15 центнер арăмути пухса типĕтнĕ. 45 лав ытла çăка милĕкĕ тата ытти йывăç турачĕсем хатĕрленĕ. Вăрманти курăксене пухса силос хыватпăр.

Колхозра выльăх-чĕрлĕх витисене хĕле хатĕрлес ĕç те аннăн пырать, вĕсене юсама ятарласа бригада турăмăр. Бригада халĕ 60 сысна вырнаçмалăх вите тăвать. Лаша витисен урайĕсене çарма юман хăмасем çителĕклĕ хатĕрлерĕмĕр. Пирĕн колхозăн шыв арманĕ пур. Çак арманăн вăйĕпе авăн çапнă çĕрте усă курма шутлатпăр. Халĕ пĕво патне пымалли çулсене юсатпăр.

Тырă вырнă вăхăтра кирлĕ машинăсене юсаса пĕтернĕ. Ку ĕçре колхоз тимĕрçи П. Константинов юлташ лайăх ĕçлет. Жнейкăсемпе молотилкăсен уйрăм пайĕсене — подшипниксемпе шестернясене вăл хăех ирĕлтерсе тăвать. Халĕ çурласем шăллать.

Кăçал пирĕн колхозăн 210 гектар ыраш, 251 гектар çуртырри пухмалла. Ĕç вăйĕ пирĕн çителĕксĕр, çавăнпа ачаллă арăмсене ĕçе хутшăнтарас тесе ачасем валли ясли уçма шутлатпăр. Колхозри ĕçе пĕтĕмпех уйрăм сдельщинăпа тума тивет. Ăна планпа палăртса хумалла. Çак плана тăвас ĕçре колхозри актив халĕ пикенсе ĕçлет.

Иккĕленмелли çук, пирĕн ĕçлеме юратакан колхозниксемпе колхозницăсем тырпулсене пухса кĕртес ĕçре ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕç. Çĕршывпа фронт валли тата хăйсене валли те çителĕклĕ тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешĕç.

П. ВАСИЛЬЕВ,
Вăрмар районĕнчи «Красные Шептахи» колхоз председателĕ.

Совет хĕрарăмĕ хайшĕн совет государстви тăрăшнине нихăçан та манас çук

МУСКАВ, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Красный богатырь» заводра СССР Верховнăй Совет Президиумĕн çĕнĕ Указĕ [illegible] (ТАСС).

Ачасемпе амăшĕсемшĕн сталинла вăйлă тăрăшни

ЛЕНИНГРАД, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Ачасемпе амăшĕсемшĕн сталинла тăрăшни Ленин хулинчи ĕççыннисене питĕ хавхалантарнă. [illegible]

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн çĕнĕ Указĕ [illegible]

Ялти çамрăксен каçхи шкулĕсене организацилесси

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ялти çамрăксен каçхи шкулĕсене организацилесси çинчен постановлени йышăннă. [illegible] (ТАСС).

Колхозниксем шкулсене юсаса хута яраççĕ

Украинăра гитлеровецсем ишсе хăварнă шкулсене юсаса хута яраççĕ. Хуласемпе ялсенчи çынсем хăйсен вăйĕпех, государство укçине расходламасăр, шкул çуртĕсене йĕркене кĕртеççĕ, сĕтел-пукан, вĕренӳ инвентарĕ хатĕрлеççĕ.

Винница облаçĕнче ачасен ашшĕ-амăшĕсен, учительсен, шкул ачисен бригадисем 933 шкула хута янă. Кировоград, Житомир тата Сталино облаçĕсенчи пур шкулсем те тенĕ пекех çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитнĕ ĕнтĕ. (ТАСС).

Дзаугэс

Терек шывĕ хĕрринче, Дзауджикау патĕнче (Çурçĕр Осетин АССР-ĕ) Дзаугэс гидроэлектростанцине тума тытăннă. Унăн хăвачĕ 7.500 киловатт пулать. Станцие тăвас ĕçре халăх ĕçлет. Çав станци республикăри промышленность предприятийĕсене çителĕклĕ таран энерги парса тăмалла.

Вунă районри колхозниксемпе хулари ĕççыннисем кашни кунах ĕçе тухаççĕ. 34.000 кубометр ытла çĕр чавнă та ĕнтĕ. (ТАСС).

Совет Союзĕнчи электронлă пĕрремĕш микроскоп

Государствăн оптика институтĕнче пирвайхи электронлă микроскопа туса пĕтернĕ. Вăл микроскоп 25.000 хут ӳстерсе кăтартать. Ку таранччен пулнă чи лайăх микроскопсем те 2.000 хут кăна ӳстерсе кăтартнă. (ТАСС).

Пĕр авиачаçăн аэродромĕнче.

Ӳкерчĕк çинче: Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. Андреева, колхозник А. Сарсков, Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Орлов юлташсем тата авиачаçăн командирĕсемпе летчикĕсем Сарсков юлташ хăйĕн укçипе тунă самолета пирĕн паттăр земляка Ф. Н. Орлова панă ятпа пулнă митингра. С. ФРИД фотоӳкерчĕкĕ.

Аэродромра тупа туни

Пирĕн паттăр воинсен çулĕ — Хĕвеланăçне. [illegible]

— Ситрĕмĕр, Андрей Михалч! — терĕ бортрадист. [illegible] Сарсков юлташ [illegible] Галушко подполковник [illegible]

— Кăнтăрпа [illegible] çитрĕр? — тесе ыйтать Галушко юлташ.

— Орлов юлташ республикăра час-часах пулаймасть. Колхозра тата нумайччен хăналарĕç, — ответлет Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ З. А. Андреева юлташ.

— Юрать, юрать. Чимĕр-ха, Сарсков юлташ, мăшăрăрпа мĕншĕн илсе килмерĕр хăвăрпа пĕрле? Лартса килмеллеччĕ, ку самолет çинче вырăн çитет, — тет часть командирĕ.

— Пĕччен юлчĕ. Килте никăма хăварма та çук. Хуçалăха тытса тăракан та кирлĕ, — ответлет Андрей Михайлович.

— Мĕнле вĕçрĕр, сиплемерĕ-и?

— Э-эй! Куп пек самолетпа тата ăна çакăн пек шанчăклă ывăл тытса пынă чухне эпĕ кунĕн-çĕрĕн те вĕçме хатĕр... Тĕнчен хĕрри пулсан, унта та вĕçсе кайăп. Андрей Михайлович хăйĕн паттăр ывăлне татах та татах ыталать. Пурте савăнăçлăн кулаççĕ.

Галушко подполковник пире паянхи куна мĕнле интересси çинчен хăйĕн шухăшне каласа парать.

— Пирĕн нумай летчиксем халĕ боевой задание пурнăçлаççĕ. Пĕлетĕр, хĕрӳллĕ вăхăт, колхозра тырă вырнă чухнехи пекех. Кĕçĕр сирĕн канмалла пулать. Ыран ирхине вара, Андрей Михалч, хăвăн чаплă машинуна пĕтĕм часть умĕнче Орлов майора парăн.

—Сире лайăхрах курăнать. Сирĕн ĕçĕре чăрмантарас марччĕ кăна, — ответлет Сарсков юлташ.

Каçхине мухтавлă патриот килнĕ ятпа часре чаплă апатлану пулса иртет. Çав тери кăмăллă каç. Авиачаçăн чи паллă офицерĕсем—орденоносецсем хăйсен çапăçури паттăр ĕçĕсем çинчен, Хĕрлĕ Çар тăшмана халиччен нимĕнле вăрçă историйĕнче те пулман пек аркатса пыни çинчен каласа параççĕ. А. М. Сарсков хăй колхозĕн ĕçĕсемпе паллаштарать, чĕрери вĕри туйăмĕсем çинчен калать. Хамăрăн тăван çĕршыври калăхсене çĕнтерӳ патне ертсе каякан аслă полководец Сталин юлташ сывлăхĕшĕн, Совет Союзĕнчи халăхсен аслă туслăхĕпе тăванлăхĕшĕн, фронта ывăнма пĕлмесĕр пулăшса тăракан тылри патриотсемшĕн — рабочисемпе колхозниксемшĕн, хамăрăн юратнă тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн çĕкleççĕ паянхи тĕлпулу куркине мухтавлă летчиксемпе вĕсен хăнисем. Анчах сталинла соколсем ыранхи ĕç çинчен пĕр самантлăха та манмаççĕ. Фронт парутăрăвĕнчи апатлану вăраха тăсăлмасть. Летчиксем, командирсем канма саланаççĕ.

Ирхине Андрей Михайлович Сарсков пуринчен малтан вăранчĕ. Тен вăл хумханнипе кĕçĕр пачах та сывăрман?! Пирĕн пуç тӳпинче кăвак сутăлпах моторсем кĕрлеме пуçларĕç.

— Тăрас пулать, ачсемĕр, сынсем ав ĕçе каяççĕ,—тет вăл пирĕн тавра уткаласа çӳресе,—колхозра та тахçанах уляха тухса карĕç пулĕ ĕнтĕ...

Паян — вырсарникун. Анчах кунта [illegible]

мăнаçлăн сарса, ирхи хĕвел çинче йăлтăртатса «Сарсков колхозник» тăрать (çĕнĕ самолета летчиксем кунта çавăн пек чĕнеççĕ). Авиачасть хăйĕн ялавĕ айне строя тӳрленсе тăрать. Часри оркестр çар маршĕсем калать. Акă аякра «эмка» автомашина курăнса каять. Часть командирĕ Галушко подполковник часе «смирно» команда парать те автомашинăна хирĕç утса каять. Машинăран колхозник А. М. Сарсков, Совет Союзĕн Геройĕ майор Ф. Н. Орлов, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ З. А. Андреева юлташсем тухаççĕ. Часть командирĕ сылтăм аллине козырек патне тытса вĕсем еннелле утса каять те, Андреева юлташа рапорт парать.

СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ З. А. Андреева юлташ строя тăракан летчиксемпе командирсене ыра сывлăх сунать. Строй харăссăн та хавхалануллăн ответ парать.

Унтан часть командирĕ Галушко подполковник Чăваш республикинчи Улатăр районĕнчи «Красный луч» колхоз членĕ А. М. Сарсков колхозник Совет Союзĕн Геройне Ф. Н. Орлов майора самолет парас ятпа пухăннă митинга уçăлнă тесе пĕлтерет.

Малтанхи сăмаха часть командирĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Береговой майор калать.

— Паян пирĕн часре пысăк уяв, — тет вăл. — Вырăс сынни Сарсков колхозник чăваш халăхĕн паттăр ывăлне Совет Союзĕн Геройне Орлов майора хăй перекетленĕ укçа-тенкĕпе илнĕ самолета парать. Çакă вăл пирĕн çĕршыври тĕрлĕ национальноçсем хушшинчи туслăх мĕн тери çирĕппине кăтартса парать. Халăхсем хушшинчи сталинла туслăх пур чухне, вăл иксĕлми çирĕп чухне пирĕн вăйăмăра нимĕнле тăшман та хавшатма пултараймасть. Совет тылĕ хăватлăн пулăшса тăракан Хĕрлĕ Çар ирсĕр нимĕç захватчикĕсене пĕр хĕрхенмесĕр аркатса пырать. Пирĕн хăватлă çил-çунатлă машинăсен йышне паян çĕнĕ самолет хутшăнать. Эпир Орлов юлташа çав машинăпа тăшмана малашне те пĕр хĕрхенмесĕр аркатса пыма ырă сунатпăр.

Унтан А. М. Сарсков колхознике сăмах параççĕ. Ĕçчен патриотăн сăмахĕ кĕске.

— Совет влаçĕ мана ирĕклĕн ĕçлеме çĕр пачĕ. Çав çĕр çинче тӳррĕн ĕçлесе эпĕ пурнăç куртăм. Эпĕ икĕ ывăл ӳстертĕм. Вĕсем ирсĕр тăшманпа хаяррăн çапăçрĕç. Ывăлсене эпĕ çухатрăм. Анчах телейĕм хан çухалман. Чăваш халăхĕн чи паттăр ывăлĕсенчен пĕрине Федот Никитич Орлов юлташа ывăллăха илтĕм. Хам ĕçлесе тупнă укçа-тенкĕпе ăна валли çак самолета туянтăм. Хăюллăнрах вĕç унпа, ывăлăм, аркат, пĕтер тăшмана, тăван çĕршыва татах та ытларах чыспа чап кӳр.

Андрей Михайлович хăйĕн геройне — Орлов юлташа тăван ашшĕ пек ыталаса илет те хытă чуп тăвать.

Унтан вĕсем иккĕшĕ, сĕтел патне пырса, самолет пани çинчен калакан документа — формуляра алă пусаççĕ.

«А. М. Сарсков колхозник укçитенкипе илнĕ... №-лĕ самолета Совет Союзĕн Геройне Ф. Н. Орлов майора панă.

Паракане: САРСКОВ, Чăваш республикинчи Улатăр районĕнчи «Красный луч» колхоз колхозникĕ.

Йышăнаканĕ: ОРЛОВ, майор, Совет Союзĕн Геройĕ.

1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕ».

Çак чаплă документа алă пуснă хыççăн Совет Союзĕн Геройĕ майор Ф. Н. Орлов сăмах илет. Унăн сăмахĕ — тăван çĕршыв ывăлĕ хăйĕн халăхĕ умĕнче, çапăçури юлташĕсем умĕнче, пĕтĕм çĕршыва аслă çулпуç умĕнче тупа туни пулчĕ.

—Тăван çĕршывăм, тăван халăхăм. [illegible]

чыслăхĕпе чапне нумай çĕршывсем Урала илсе каçарăп, халĕ те нимĕç пусмăрлăхĕнче асапланакан халăхсем валли ирĕклĕхпе телейлĕ пурнăç илсе кайăп. Аслă çулпуç Верховнăй Главнокомандующи Сталин кăтартса панă çула нихăçан та çухатмăп!

Часть оркестрĕ Совет Союзĕн гимне калать. Герой татах халĕ хăйĕн ашшĕ пулса тăнă Андрей Михайловича ыталать.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ Андреева юлташ хăюллă соколсене ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР правительстви ячĕпе саламлать. Паттăр воинсене вăл пирĕн республикăри ĕççыннисем — рабочисемпе колхозниксем фронтшăн ĕçлени çинчен каласа парать. Вăл чăваш халăхĕ хăйĕн фронтри ывăлĕсем патне янă сыррури сăмахсене аса илтерет:

— Сире аслă Атăл хăйĕн кумĕсем çинче чăпăл туса çитĕнтернĕ. Тăван совет çĕршывĕ сире хаяр ăмăрткайăк пек вĕçме çерçака та хăватлă çунатсем панă, ирсĕр тăшмана таптама — танксем, фашистла тискер кайăксене вĕлерсе пĕтерме — шанчăклă хĕçпăшал панă. Пуринчен пахараххи — çапăçура нимĕнтен хăрама пĕлмен чĕресем панă. Çапăçу хирĕнче арăслан пек пулăр! Чыслă тытăр асаттесемпе аттесен ятне, чĕрере усрăр халăх тивĕçне!

Унтан Андреева юлташ Орлов юлташа çапăçу хирĕнче çĕнĕ çĕнтерӳсем тума сунса çапла калать:

— Хăвăн тăван аннӳне— Тăван çĕршыва яланах чĕререн парăнса тăр, тăшмана пĕтерес тесе нимĕн умĕнче те чарăнса ан тăр, командованин приказĕсене яланах тĕрĕс те срокра пурнăçласа пыр, чăваш халăхĕ эсĕ тӳрĕ кăмăллă та тĕрĕс чĕрелĕ пулнипе, хăвăн халăхна яланах юратнипе пĕлет, малашне те хăвна çавăн пек тыт.

Юлашкинчен авиасоединени командирĕн заместителĕ подполковник Заяц юлташ А. М. Сарсков колхознике вăл сывлăш-çар вăйĕсем валли самолет илсе панăшăн тав тăвать, Совет Союзĕн Геройне Орлов юлташа çав самолетпа командовани приказĕсене тĕрĕс пурнăçласа кĕртсе пыма чĕнет.

Митинг, малашнехи çапăçусенче татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума пулса, боевой обязательствăсем йышăнать.

Митинг хыççăн авиачасть хăйĕн ялавĕ айне тăрса трибуна умĕнчен тачă стройпа иртсе каять.

Кăнтăрла тĕлнелле чаплă патриота Сарсков юлташа тăван çĕршывăн аслă столицине Мускава курма самолетпа илсе кайрĕç. Кунта курмаллисем нумай. Чăн малтанах эпир нимĕçсенчен тытса илнĕ хĕçпăшалсен выставкине кĕрсе куртăмăр. Выставкăра чылай çӳренĕ хыççăн эпир пĕр тĕшкел çине лартăмăр та, Андрей Михайлович пире çапла каларĕ:

— Вăт мĕн туса тултарнă ирсĕр нимĕç этемме вĕлерме, пире чуралăха чикме. Пăхатăн та, çакăн, чухлĕ тимĕр-хурçа нимĕнле вăй та тӳссе тăраймасть пек туйăнать. Çапах та пирĕн совет çынни нимĕнле хурçăран та çирĕпрех пулчĕ.

— Çапла, Андрей Михалч, çынни те, хурçи те пирĕн нимĕçсеннинчен çирĕпрех пулчĕ, — ответлет Федот Никитич.

Метро çине ларса курсан, Мускавăн чаплă дворецĕсене пăхса тухсан:

— Нимĕçсем этем валли вилĕм хатĕрленĕ чухне, эпир этем валли ырă пурнăç тунă, — терĕ колхозник.

— Тĕрĕс. Фашизм вăл — вилĕм. Совет влаçĕ — пурнăç. Пурнăç вилĕме çĕнтерет!

Каçхине Андрей Михайлович театрта «Адмирал Нахимов» спектакле курчĕ. Вăл кунта пирĕн çĕршывăн авалхи чапне курса савăнчĕ.

Тепĕр кунне паттăр вĕçевçĕ Федот Никитич Орлов хăйĕн самолечĕпе чаплă патриот-колхознике фронтран киле леçсе [illegible] Андрей [illegible]

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ.

«Чăваш Коммуни» хаçатăн ятарлă корреспонденчĕ.

Совет Союзĕ кĕрешекен Данипе çыхăну тытма пуçлани çинчен

Дани «Ирĕклĕх совечĕ» 1944 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче Совет правительстввине кĕрешекен Данипе çыхăнусем тытма пуçлама сĕннĕ тата кĕрешекен Дани представительне Мускавра йышăнма ыйтнă. Çак сĕнĕве ирĕклĕ датчансен представителĕсем Лондонпа Вашингтонра та панă. Данин «Ирĕклĕх совечĕ» янă сырура çапла каланă: Дани 1941 çулта Совет Союзĕпе дипломатиллĕ çыхăнусем тытма пăрахас ыйтăва Дани халăхне хирĕç пырса тата нимĕçсем хытă хĕснипе пурнăçланă, тенĕ. Çав сырура тата çапла каланă: Коминтерна хирĕç тунă пакт çумне Дани нимĕçсем хушнипе хутшăннă, çав пакта йышăннă пирки Дани халăхĕн аслă массисем вăйлă тарăхнă, Дани çĕрне оккупациленĕренпе вĕсем пĕрремĕш хут уççăнах демонстрацисем тунă. 1943 çулхи августăн 29-мĕшĕнче правительствăпа Ригсдаг хăйсене хăйсем вырăнтан кăларнă хыççăн тата король тыткăна кĕрсе ӳкнĕ хыççăн «Ирĕклĕх совечĕ» Данипе пĕртен-пĕр орган пулса тăрать. Дани халăхĕ Совет Союзĕпе туслăн çыхăнма шухăшланипе çав орган çеç ирĕклĕн, никама пăхăнмасăр палăртма пултарать.

Совет правительстви 1944 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнче хăй Данин «Ирĕклĕх совечĕпе» халех çыхăну тытма пуçлама тата кĕрешекен Данин представительне Мускавра йышăнма килĕшни çинчен пĕлтернĕ.

Кĕрешекен Данин Совет Союзĕнчи полномочнăй представителĕ пулма (унăн прависем вара посланник прависемпе тан пулаççĕ) «Ирĕклĕх совечĕ» Данин паллă общество деятельне Томас Дэссинг господина уйăрса лартнă.

„Вăрçăсен историйĕнче халиччен пулман хăватлă наступлени“

ХĔРЛĔ ÇАРĂН ÇĔНТЕРĔВĔСЕМ ÇИНЧЕН ЮТ ÇĔРШЫВ ХАÇАЧĔСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Англири хаçатсемпе радио Хĕрлĕ Çарăн наступленийĕ çинчен халĕ те нумай çыраççĕ.

«Санди экспресс» хаçат çапла çырать: «Хĕрлĕ Çарăн çил-тăвăллă кампанийĕ пек кампани вăрçăсен историйĕнче урăх пулман. Совет наступленийĕн анлăшĕпе, хăвăртлăхĕпе нимĕн те танлашма пултараймасть. Германи умне пĕтсе ларас хăрушлăх тухса тăчĕ».

Хаçат çакна палăртать: «Вильно хулине тытса илнĕ нимĕçсен çав хуларан çурçĕртерехре тăракан çарĕсене кăнтăртарахра тăракан çарĕсенчен уйăрса ярать çеç мар, вăл вырăссене Хĕвелтухăç Пруссирен 120 мильăра анлă фронт тума май парать».

«Нимĕçсем Хĕвелтухăç фронтĕнче йывăр кунсем пурăнса ирттереççĕ, — тет Лондонри радио обозревателĕ. — Вырăссен армийĕсем, анлă фронтпа наступлени туса пырса, Барановичи хулине тытса илчĕç, паян çĕрле вĕсем Вильно хули урамĕсенче çапăçнă. Чугун çулсен çак паха узелĕсем Хĕвелтухăç Прусси патне пымалли ишçери вырăнсене хӳтĕлесе тăраççĕ. Вырăссен малти чаçĕсем халĕ ĕнтĕ Хĕвелтухăç Пруссирен мĕн пурĕ те 100 мильăра çеç тăраççĕ. Вильно хулине нимĕçсем хăйсемех Прибалтика хапхи тесе ят паначчĕ».

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăра провинцире тухакан хаçатсем Хĕрлĕ Çар наступленийĕн тĕлĕнмелле пысăк хăвăртлăхне, паттăр Хĕрлĕ Çарăн пысăк ăсталăхне тата çапăçас шухăш-кăмăлне, çавăн пекех тата унăн подразделенийĕсем пĕр-пĕринпе çав тери таччăн çыхăнса кĕрешнине пысăк вырăна хурса хаклаççĕ.

Луисвильте (Кентукки штачĕ) тухакан «Курьер Джорнэл» хаçат Хĕрлĕ Çар наступленийĕн халиччен курман хăвăртлăхне палăртать. Çав наступлени Германин Польшăпа Францири «çиçĕмле вăрçинчен» икĕ хут хăвăртрах саралса пырать, тет. «Хĕрлĕ Çар Геркулес пек паттăр ĕçсем тăвать, унăн хальхи наступленийĕн хăвăртлăхĕ вăл çиçĕмле вăрçăн рекорчĕ пулса тăрать», —тесе çырать хаçат.

ОТТАВА, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Канадăра тухакан «Сатэрдэй Найт Уикли» журнал Канадăри паллă обозревателĕн, радиокомментаторăн Вудсайдăн статьине пичетленĕ. Вудсайд совет командованине питĕ пысăк вырăна хурса хаклать.

АЛЖИР, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио обозревателĕ çапла калать: «Совет çарĕсем Вильно хулине çитни çинчен калакан хыпар (Вильно хулинче халь хаяр çапăçусем пыраççĕ) Германи çарĕ калама çук пысăк поражени тӳснине тата Хĕрлĕ Çарăн наступленине тытса чарма çуккине тепĕр хут кăтартса парать», тет.

ГЕРМАНИ «КОЛОНИСЧĔСЕМ» СОВЕТ СОЮЗĔН ОККУПАЦИЛЕНĔ РАЙОНĔСЕНЧЕН ТАРНИ

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Санди таймс» хаçат хăй илнĕ хыпарсем тăрăх çапла пĕлтерет: 1941 çул хыççăн Украинăна вырнаçнă нимĕç «колонисчĕсем», хĕллехи совет наступленийĕ вăхăтĕнче унтан тарнăскерсем, халĕ те хĕвеланăçнелле каякан çулсене тултарса тăраççĕ-ха.

«Вĕçĕ-хĕррисĕр каравансем Румынин тусанлă çулĕсемпе Венгрие тата Чехословакие каяççĕ, унта çав колонистсен пысăк пайне пĕр вăхăтлăха пурăнма хăвараççĕ. Германи влаçĕсем вĕсене Германие каялла таварма шикленеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем каялла таврăнни халăх шухăш-кăмăлне пăсма пултарать. «Колонистсем» нумайĕшĕ питĕ çилленнĕ, вĕсем Гитлер çине шанни вырăнсăр пулса тăнине пытарма та тăрашмаççĕ».

ХĔВЕЛТУХĂÇ ПРУССИЕ ВĂРÇĂ ЗОНИНЧЕ ТĂРАТЬ ТЕСЕ ПĔЛТЕРНĔ

СОКГОЛЬМ, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Моргонтиднинген» хаçат Берн хулинчен çапла пĕлтерет: «Хĕвелтухăç Пруссие вăрçă зонинче тăрать тесе пĕлтернĕ. Ку область пĕрремĕш оборона округĕ шутланать. Гаулейтер Кох çапла каланă: хĕрарăмсемпе ачасен кунтан Кăнтăр-хĕвеланăç Германие тухса кайма хатĕр тăмалла. Вартегау, Данциг районĕсенче тата Хĕвелтухăç Пруссири пĕчĕк ачасемпе çамрăксене тырпула халех пухса кĕртме мобилизацилеççĕ.

ГИТЛЕР ХĂЙĔН СТАВКИНЕ ГЕРМАНИЕ ШАЛА КУÇАРНĂ

СОКГОЛЬМ, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Афтонтиднинген» хаçачĕ çапла çырать: «Хĕвелтухăçĕнчи лару-тăру хăратмаллипех хăратса тănине кура, Гитлер хăйĕн Летцен хулинче (Хĕвелтухăç Прусси) тăнă ставкине Германие шала куçарнă. Армин Растенбург хулинче тăракан главнăй ставки тата авиацин Роминтен хулинче тăракан главнăй ставки те кунтан урăх вырăна хĕвеланăçнелле куçса каяççĕ».

БУДАПЕШТРИ ВЛАÇСЕМ ХАЛĂХА ХУЛАРАН ЧАСРАХ ТУХСА КАЙМА ЧĔНЕÇÇĔ

СТАМБУЛ, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Венгри хаçачĕсем июнĕн 29-мĕшĕнче Будапешт хулин ПВО штабĕ хулари халăха чĕнсе калани пичетлесе кăларнă. Çав чĕнӳре çапла каланă: бомбоубежищĕсем питĕ сахал пирки халăхăн хăрушсăртарах вырăнсене тухса каймалла, тенĕ. Тата çапла каланă: «Хуларан тухса каймашкăн транспорт пур чухне» часрах тухса кайма тăрăшмалла, тенĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 9-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Кан хулине ирĕке кăларнă. Тăшман халĕ те нумай тĕлте хирĕç тăрать-ха, анчах та çав тĕлсене пĕр чарăнмасăр пĕтерсе пыратпăр. Одон шывĕ хĕрринчи плацдармра тата Комон хулипе Тилли-Сюр-Сель хули секторĕнче тĕллĕн-тĕллĕн çитĕнӳсем тунă.

Котантен çурутравĕн никĕсĕнче союзниксен çарĕсем икĕ енчен те çаварса илнĕ хыççăн Ла-Э-Дю-Пюи хулинче тăшман хирĕç тăнине пусарса лартнă. Тăшман хытă хирĕç тăнă пулин те, союзниксен çарĕсем Сент-Эни еннелле кăштах куçнă. Тăшман çавăн пекех Сен-Жан-Де-Дэ районĕнче те хытă хирĕç тăрать».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 10-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Июлĕн 9-мĕшĕнче ирхине пирĕн авиаци тăшман çине питĕ нумай бомба тăкнă. Вара пирĕн танксемпе пехота Кан хулине çурçĕр енчен тата хĕвеланăçĕнчен пыракан пур çулсем тăрăх та наступлени туса пынă, тăшмана хуларан хĕссе кăларнă, унтан ăна Орн шывĕ хĕррине хăваласа янă. Çак наступление тинĕс артиллерийĕ тата Нормандии аэродромĕсемпе усă куракан самолетсем (ракета пăрахма майлаштарнăскерсем) пулăшса пынă. Англирен вĕçе-вĕçе килекен истребительсем Кан хулинчен кăнтăргарахра тата хĕвелтухăçнерехре çапăçнă, вĕсем тăшмана çĕнĕ вăйсем илсе пыма чăрмантарса тăнă. Илнĕ хыпарсем тăрăх, çак операцире тăшмана йывăр çухатусем тӳснĕ.

Пирĕн патрульсем Одон шывĕ Орн шывне юхса кĕнĕ çĕртен инçех те мар вырăнта Одон шывĕ урлă каçнă. Фронтăн хĕвеланăç флангĕнче Карантан хулипе Перье хули хушшинчи çулăн икĕ енĕпе те наступлени туса пырса, пирĕн çарсем Сентени ялĕ патне пырса тухнă. Вир шывĕ хĕрринчи плацдарма, тăшман çаплах хирĕç тăрать пулин те, аслăлатса çирĕплетнĕ.

Авиаци тăшманăн вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Италире пĕтĕм фронт талккăшĕпех вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем тăшманăн Тиррен тинĕсĕпе Поджибонси хули хушшинчи позицийĕсем çине нумай шала савăлланса кĕрсе кайнă, Вольтерра хулине туртса илнĕ, вара çав хуларан 7 километра яхăн çурçĕрелле куçнă. Ареццо хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре фронт линийĕ хули[illegible] сем халĕ Умбертиде хулинчен 12 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тăраççĕ. Фронтăн Адриатика участокĕнче Филоттрано хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Музоне шывĕ патне çитиччен куçнă. Озимо хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшманăн контратакисене сирсе янă.

Союзниксен авиацийĕ ĕнер Плоешти хулинчи (Румыни) нефть тасатакан заводсене тапăннă, çавăн пекех тата çапăçусен [illegible]

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 3—23.

Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 [illegible] Тираж 14.400 экз.

НТ 00253